теле 9-10 стр. программа ТВ

«Шкул – тăван кил пек»

# ВЫРĂСЛАНСА КАЯС МАРЧЧĔ

7-мĕш стр.

www.tavan-en.ru

шупашкар ТĂВАН ЕН

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2013

№ 36 (71-72) 10183-10184 СЕНТЯБРЬ 20-26 2013 ЭРНЕ КУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

Лица 12-мĕш стр.

ИНФОРМАЦИ КУНĔ

# Шалуран пуçласа Йывăç кунĕ таранах

Чăваш Енре, çав шутра Шупашкар районĕнче, те уйăхсерен иртекен информаци кунĕсем халăха влаç органĕсенче тăрăшаканскерпе тĕл пулса тĕрлĕ темăна сӳтсе явма май параççĕ. Сентябрĕн 18-мĕшĕнче иртнĕ информаци кунĕ те çынсене кăсăклантаракан ыйтусен хуравне тупма пулăшрĕ. ЧР строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕн çумĕнчен Александр Герасимовран, район пуçлăхĕнчен Алевтина Исаевăран, район администраци пуçлăхĕн çумĕнчен Вячеслав Сидоровран, район больницин тĕп тухтăрĕнчен Михаил Алексеевран йĕркеленнĕ 2-мĕш ушкăн Сарапакасси тата Лапсар ял тăрăхĕсенче пулчĕ.

www.gov.cap.ru

Çатракасси клубĕнче пухăннă халăха А. Исаева республикăра тата районта патшалăхăн социаллă политики еплерех пурнăçланни пирки кĕскен каласа кăтартрĕ. Бюджет сферинче тăрăшакан уйрăм категорири ĕçченсен шалу виçи ӳснине палăртрĕ. Ăна кăçал 3 тапхăрпа хăпартнă: январĕн 1-мĕшĕнчен, апрелĕн 1-мĕшĕнчен, июлĕн 1-мĕшĕнчен. Çапла вара кăçалхи пĕрремĕш çур çулти кăтарту тăрăх районта бюджет сферинче тăрăшакансен вăтам ĕç укçи 16173 тенкĕпе танлашнă. Сăмахран, пĕтĕмĕшле вĕрентӳ учрежденийĕсенчи вĕрентекенсен, 2012 çулхи вăтам шалупа танлаштарсан, 40,7% ӳснĕ – 18496 тенкĕ, шкул çулне çитменнисен учрежденийĕсенчи педагогсен 23,1% хăпарнă – 15597 тенкĕ, культура учрежденийĕсенче тăрăшакансен 14,5% пысăкланнă – 11139 тенкĕ. Пĕтĕмĕшле районăн пĕрлештернĕ бюджетĕнче бюджет сферинче ĕçлекен уйрăм категорири работниксене тӳлеме 186,1 млн тенкĕ пăхса хунă. Кунта çакна та палăртса хăвармалла: вĕсен шалăвне ӳстерме 35,1 млн тенкĕ хушма укçа уйăрнă.

Кăçалтан Чăваш Республикинче аслă ăрури çынсен диспансеризаци тухмалла. 21 çул тултарсан кашни 3 çултан çынсен хăйсен сывлăхне тĕрĕслеттермелле. Кун пирки нумайăшĕ илтнĕ ĕнтĕ, анчах кашниех тухтăр патне кайма васкамастьха. М. Алексеев пухăннисене тепĕр хут чĕнсе каларĕ, сывлăхлă пулни хамăртан нумай килнине палăртрĕ.

Çул çинчи лару-тăру чылайăшне пăшăрхантарать. Шăпах çакăн пирки калаçрĕ те информаци кунне хутшăннă Александр Герасимов. Республикăра çамрăк водительсем, 3 çултан сахалрах стажлисем, аварие лекнĕ тĕслĕх нумайраннине каларĕ вăл. Ытларах эрне кун та шăмат кун авари пулса иртет иккен, уйрăмах миçе сехетре пулни те паллă: 17-20 сехетсенче. Çул çинчи лару-тăрăва лайăхлатас тесен пĕрин кăна мар, пурин те тăрăшмалла, ачасемпе калаçусем ирттермелле, халиччен пулнă профилактика мероприятийĕсене малашне те йĕркелемелле. Çак тĕллевсене пурнăçлама «2013-2020 çулсенче Шупашкар районĕнче çул çинчи хăрушсăрлăха ӳстересси» районăн тĕллевлĕ программи те пулăшĕ.

Кĕркунне çитрĕ, йывăç лартма, тавралăха тирпей-илем кĕртме вăхăт. Вячеслав Сидоров каланă тăрăх, çулсеренех районта сентябрĕн юлашки вунă кунĕнчен пуçласа октябрĕн пĕрремĕш вунă кунĕнче «Йывăç ларт тата ăна упра» Йывăç кунĕн кĕркуннехи тапхăрĕ иртет. Çуркуннехи тапхăра 2 пин çын ытла хутшăннă пулнă, пурĕ 21635 хунав лартнă. Халĕ ĕçе малалла тăсмалла. Çак темăпа Карачурари шкулта пухăннă халăх питĕ активлă калаçрĕ. «Йывăç лартнипе кăна мар, ăна тата упраса хăварма тăрăшмалла», – пĕр шухăшлă пулчĕç вĕсем. Хунав тымар янă хыççăн выльăх-чĕрлĕх таптаса пĕтерни пĕрре кăна пулман вĕт. Çавăнпа та çак ыйту çине пысăк тимлĕх уйăрма ыйтрĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ асăннă шкулта мероприятие «Йывăç ларт тата ăна хăвах упра» тесе ят панă.

Кунта пурăнакансене тахçанах пĕр ыйту канăç памасть. Ялти шкул тепĕр çулталăкран 100 çул тултарать. Вăл кивĕ пулни каламасăрах паллă. «Пире çĕнĕ шкул кирлĕ, ачасем валли кружок е секци йĕркелеме те çук, физкультура урокне те ав коридортах иртереççĕ...» – пĕр шухăшлăн пулса калаçрĕç пухăннисем. Алевтина Исаева ыйту çивĕч пулнине палăртрĕ. Карачурасен шанăç çук темелле мар, шкул тăвас проекта Чăваш Республикин инвестици программине кĕртнĕ. Ăна пăхса тухса кирлĕ йышăну тăвĕç.

ЛЮБОВЬ ГОРОДИЩЕНСКАЯ

САМАХ МАЙ

**Апрелĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа майăн 31-мĕшĕччен иртternĕ çуркуннехи экологи уйăхлăхĕ вăхăтĕнче районти ялсенчен 2085 кубла метр каяш турттарса тухнă, санкцилемен 102 çӳп-çап купине пĕтернĕ.**

РЕСПУБЛИКĂРА

**Ĕнер ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев РФ Правительствин Председателĕн çумĕ Ольга Голодец ирттернĕ видеоконференцие хутшăннă.** 2012 çулта Раççей Президенчĕ Владимир Путин май уйăхĕнчи хушăвĕсене пурнăçланине сӳтсе явнă. Çĕршыври 19 регионти чи лайăх 25 шкулсен шутне Шупашкарти 3-мĕш лицей та кĕнĕ. РФ ĕç министрĕ Максим Топилин бюджет сферинче ĕçлекен уйрăм категорийĕсен ĕç укçине ӳстермелли пирки доклад тунă. РФ сывлăх сыхлавĕн министрĕ Вероника Скворцова çĕршыври хăш-пĕр регионта чĕрепе юн тымарĕсен чирĕнчен вилекенсен шучĕ нумайланнине палăртнă.

**Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи январь-июль уйăхĕсенче Чăваш Енре вăтам ĕç укçи 18623,4 тенкĕпе танлашнă.** Çак кăтартупа федерацин Атăлçи округĕнче республика 10-мĕш вырăн йышăнать. Чи пысăк вăтам ĕç укçи Тутарстанра – 24809,8 тенкĕ.

Çуралакансен йышĕпе вара Чăваш Ен 7-мĕш вырăнта, 10 пин халăх пуçне 139 çын. Чи пысăк кăтарту Тутар Республикинче – 147 çын, чи пĕчĕк кăтарту вара Мордовинче – 99 çын. Халăх йышĕ ӳснипе республика 4-мĕш вырăн йышăнать – пĕр пин çын пуçне 0,4. Çак енĕпе чи пысăк кăтарту вара Удмуртире – 1,5.

Ĕç укçине вăхăтра тӳлеменнипе 2013 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне 3,9 млн тенкĕ парăм пухăннă. Ку – Атăлçи округĕнчи лайăх кăтарту. Асăннă сумма Муркаш районĕнчи «Ударник» предприяти çине лекет. Чи пысăк парăм вара Тутарстанра – 90,379 млн тенкĕ.

**Çут çанталăка упрамалли çулталăкпа килĕшӳллĕн Вăрман хуçалăхĕн федераци агентстви октябрĕн 5-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейре «Пурăн, вăрман» акци ирттерет.** Унăн тĕллевĕ – вăрмана çĕнетсе тăратас, пуянлатас ыйтăва татса панă çĕре халăха явăçтарасси. Çак вăхăтра йывăççем лартма, тавралăха тирпейлеме, тасатма, вăрмана упрама чĕнсе лекцисем, куравсем йĕркелеме палăртнă. Чăваш Енре акци Йывăç кунĕпе пĕрле иртĕ.

**Чăваш Республикинче ял хуçалăх продукцине сутмалли «Кĕркунне парнисем – 2013» уйăхлăх малалла пырать.** Вăл социаллă политикăллă тата экономика пĕлтерĕшлĕ, регионти потребительсен рынокĕнчи лару-тăрăва лайăхлатма, хаксем ӳснине чакарма май парать. Ял хуçалăх продукцийĕн ярмăрккисем Шупашкар, Канаш, Çĕрпӳ, Улатăр, Çĕмĕрле тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче уçăлнă. Вырăнти тавар тăвакансен продукцине – пахча çимĕçе, пан улмие, тыр-пула, курăксене тата ытти не те – сутаççĕ. Ял хуçалăх продукцийĕн хакĕ пысăк суту-илӳ вырăнĕсенчи чи йӳнĕ хакран 40% пĕчĕкрех.

ЭРНЕ МĔНПЕ АСРА ЮЛЧĔ?

**Ксения КРАСНОВА,**
28 çулта, Кӳкеç:

– Çак эрнене кĕçĕн ывăлăмпа, Степăпа, ирттертĕм. Вăл тинех «ш» сас палли калама вĕренчĕ. Халĕ «машина» сăмахпа уççăнах пуплет. Унсăр пуçне аслă ачана учитель мухтанине пĕлтĕм. Вăл вĕренӳре лайăх ĕнчен палăрма пуçларĕ.

Редакция газеты «Тăван Ен» объявляет рекламную АКЦИЮ

"НОВЫЙ СЕЗОН"

скидка 10%

Только с 1 по 30 сентября 2013 года обладатель купона имеет право на 10 % скидку на рекламно-информационный материал.

* Скидка не распространяется на публикацию площадью менее 500 кв. см и рубрику "Земельные отношения".
* Другие скидки по прайс-листу не действуют.

ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ

**Паянхи кун тĕлне республикăри коммуналлă хуçалăх объекчĕсем хутмалли сезона**

**99%** **хатĕр.**

САНТАЛĂК Chuvashia.com тата yandex.ru сайтсем пĕтĕрнĕ тăрăх

Эрне кун Сент, 20 +13° каç +9° Пĕлĕтлĕ çанталăк. Çумăр çукалать.

Шăмат кун Сент, 21 +13° каç +9° Пĕлĕтлĕ çанталăк. Çумăр çукалать.

Вырсарни кун Сент, 22 +15° каç +9° Улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк.

Сентябрь, 23 Тунти кун +13°
Сентябрь, 24 Ытлари кун +12°
Сентябрь, 25 Юн кун +11°
Сентябрь, 26 Кĕçнерни кун +10°

валюта курсĕ Сентябрь, 20-мĕшĕ
$ 31,59
€ 42,75

# Кун йĕркинче

ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ

## Хĕллене хатĕрленеççĕ

Райадминистрацин ял хуçалăх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне района ял хуçалăх организаци тата хресчен (ферма) хуçалăхĕнче пĕрчĕллĕ кĕрхи культурăна пурĕ 2907 га лаптăк çинче акса хăварнă (планран — 100,2%).

Вырма ĕçĕсене Шупашкар районĕнче вĕçленĕ. Тĕш тырă тата пăрça йышши культурăсене 10 140 га лаптăк çинчен пухса кĕртнĕ. Пурĕ 19629 тонна çапса илнĕ. Вăтам тухăç – 19,4 ц/га.

Районти аграри ĕçченĕсем 42 га лаптăк çинче çĕр улми пуçтарнă (12%). Пурĕ 743 тонна пухнă, вăтам тухăç – 176,9 ц/га.

Кĕрхи тырă акма 3432 га çĕр хатĕрленĕ. 2050 га лаптăк çинче кĕрхи çĕртме тунă. Район хуçалăхĕсем хĕлле валли 6398 тонна улăм (105,2%), 20360 тонна сенаж (115%), 2770 тонна силос (17,4%) хатĕрленĕ. Ĕç малалла пырать.

## Çĕнĕ программăна тишкерчĕç

Кӳкеçри Культурăпа кану центрĕнче культура ĕçченĕсен черетлĕ канашлăвĕ иртнĕ. Унта информацип культура центрĕн директорĕсем, пултаруллă ушкăн ертӳçисем, информацип методика центрĕн методисчĕсем хутшăннă. Уйрăмах «2014-2016 çулсенче Шупашкар районĕнче культурăна упрасси тата аталантарасси» тĕллевлĕ программа çинче чарăнса тăнă. Райадминистрацин социаллă аталану пайăн пуçлăхĕ районти культурăна аталантарма тата ăна сыхласа хăварма условисем тумаллине каланă. Тепĕр тĕп ыйтăва – Ваттисен кунне халлланă мероприятисене ирттерессине – пăхса тухнă. Унсăр пуçне канашлура «Эпир – пĕрле» фестиваль-конкурс çĕнтерӳçисене дипломсемпе чысланă, асăнмалăх парне панă.

## Ĕçлĕ планеркăра

Тунти кун райадминистраци пуçлăхĕ Г.И. Егоров ертсе пынипе черетлĕ планерка иртнĕ, актуаллă ыйтусене пăхса тухнă. Кайран патшалăх учрежденийĕсенчи ĕçсене пĕтĕмлетӳ тунă. 2013 çулхи 6 уйăхри Социаллă страховани фончĕн регионти пайĕнчи ĕçсемпе Шупашкар районĕн пайĕнчи уполномоченнăйĕ З.П. Горбунова паллаштарнă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне района 867 страхователе регистрациленĕ. Палăртнă тапхăрта пурĕ 28 млн та 2013 пин тенкĕ страховка укçи тӳлеме куçарнă.

## Ветерансем кăмпа пуçтарнă

Нумаях пулмасть «Бодрость» тата «Вдохновение» клубсен ветеранĕсем кăçал пĕрремĕш хут кăмпана Иккасси лесничествине кайнă. Кунĕпех уçă сывлăшра çӳренĕ, çанталăкĕ те уяр тăнă. Кăмпа татнă чухне ветерансем хир сыснипе çурисене те курнă. Канса ларнă чухне вара вĕсем вăхăта сая ярас мар тесе пухнă кăмпана тасатнă. Р.А. Федорова кăмпана мĕнле хатĕрлемелли çинчен каласа панă.

ИНФОРМАЦИ КУНĔ

Информкунри 1-мĕш ушкăн Кăшавăш ял тăрăхĕнчи Кăрмăшри информацип культура центрĕнче пулчĕ. ЧР культура, национальноç тата архив ĕçĕсен министрĕ Вадим Ефимов концерт залĕнче халăхпа тĕл пуличчен ИКЦри юсав ĕçĕсем мĕнле пынипе паллашрĕ.

Редакци сăн ӳкерчĕкĕ

# Юсав ĕçĕсене вĕçлемелле

### Программа çĕнтерӳçи

Кăшавăшри ИКЦ – ял тăрăхĕсенче комплекслă тата компактлă стройкăсем тăвас тата хăтлăх кĕртессипе ĕçлекен республика программин çĕнтерӳçи. Çавна май 2012 çулта унта тĕплĕ юсав ирттерме Чăваш Ен бюджетĕнчен 793,8 пин тенкĕ уйăрнă, çавăн чухлех – район бюджетĕнчен. Кăçал асăннă центра республика бюджетĕнчен 958,2 пин тенкĕ уйăрнă, çак суммăн 25% – районăн. Кĕске вăхăтра ИКЦра чӳречесене улăштарнă, çуртăн мал енне, хореографи залĕнчи, фойери стенана, урая сăрланă, тăррине юсанă тата ытти ĕç тунă.

Вадим Ефимов вырăнти клубсен 2013 çулччен асăннă программăна хутшăнма май сахал пулнине палăртрĕ. 2011-2012 çулсенче республика бюджетĕнчен, сăмахран, 500 пин тенкĕ уйăрса панă пулсан вырăнти бюджетран та çавăн чухлех уйăрмалла пулнă. Çакă вырăнти бюджетшăн пысăк сумма. 2013 çулта вара республика бюджетĕнчен 75% уйăрмалла тунă, вырăнти бюджетран – 25%. Паллах, çакă клуб учрежденийĕсене программăна хутшăнма май парать. Шкул, музейсем те заявка пама пултарать.

### Пуçарупа тухмалла

Министр центрти хореографи залне кĕрсе курчĕ. Кунта та юсав ĕçĕсем ирттернĕ. Надежда Константинова хореограф 4 ушкăн пуррине каларĕ, анчах та пĕр ушкăна 15 ача çӳреме тытăннă пулсан, вĕренсе пĕтернĕ тĕле вĕсен шучĕ сахаланнине палăртрĕ. Çакна концертсене, конкурссене хутшăнма костюмсем валли ашшĕ-амăшĕн укçа-тенкĕ çителĕксĕр пулнипе çыхăнтарчĕ вăл. «Пирĕн республикăра 700 ытла культура учрежденийĕ. Вĕсене пĕр харăс костюмсем, аппаратура туянма, материалпа техника базине çĕнетме республика бюджетĕнчен пулăшма пултараймастпăр, – терĕ Вадим Ефимов. – Çавăнпа хăш чухне учрежденисен, ял тăрăхĕсен е район администрацийĕн хăйсен пуçарупа тухмалла». Министр «Раççей культури» федераци программине хутшăнмалли пирки каларĕ. Халĕ унта кирек епле организаци, учреждени заявка пама пултарать. Чăваш Енри художниксен союзне тĕслĕх вырăнне илсе кăтартрĕ. Вĕсем кăçал 3 млн тенкĕ илнĕ. Тата патшалăхăн мар грантсем пурри пирки те сăмах хускатрĕ. Çав фондсенчен те укçа-тенкĕ илме тăрăшмалли пирки каларĕ. Наталия Константинова ташă залĕнчи урайпа кăмăлсăр пулнине палăртрĕ.

Вадим Ефимов библиотека ĕçĕпе те паллашрĕ. Галина Иванова библиотекарь фондра 10 пин кĕнеке пулни, библиотекăна 1040 çын çӳрени пирки каларĕ. Министр формуляр пăхса çынсем мĕн вуланине пĕлесшĕн пулчĕ. 9-мĕш класс ачинне илчĕ. Юлашки хутĕнче «1000 лучших сочинений. Новые сочинения» кĕнекене илнĕ вăл. Библиотекарь комплектовани яп̆ах пулни пирки каларĕ. Галина Иванова 9 хаçат-журнал çырăнса илнине пĕлтерчĕ.

### Ĕç укçине – тапхăрăн-тапхăрăн

Вадим Ефимов ачасене кружоксене, секцисене çӳреме условисем туса пани аваннине, çанталăк май панă чухне юсав ĕçĕсене вĕçлемеллине каларĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕччен хутмалли тытăма юсаса ăшă ямаллине палăртрĕ вăл. «Шупашкар районĕнче 49 культура учрежденийĕ, вĕсенчен 26-не юсаса çĕнетнĕ», – терĕ министр.

Райадминистраци пуçлăхĕ Георгий Егоров бюджет сферинче тăрăшакансен уйрăм категорийĕн ĕç укçине тапхăрăнтапхăрăн ӳстермелли тата район администрацийĕ çул-йĕр хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕлĕшпе тăвакан ĕçсем çинче чарăнса тăчĕ. Çавăн пекех районăн социаллă экономика аталанăвĕ, «Хăрушлăхсăр муниципалитет йĕркеленĕвĕ» программăна пурнăçа кĕртесси тата ял хуçалăх ĕçĕсем пирки сăмах хускатрĕ. Районта çут тĕнчене килекен пепкесем йышланнине пула ача сачĕсенче черет ӳсет. Вĕсене пĕтерес тесе хушма ушкăнсем уçăлаççĕ.

САМАХ МАЙ

**Чăваш Республикинче культура отраслĕнче 5500 çын ĕçлет. 2013 çулхи 1-мĕш кварталта вăтам ĕç укçи 10518 тенкĕпе танлашнă.**

МАРИЯ ВИТАЛЬЕВА

АКТУАЛЛĂ

# Тĕп выраăнта – технологи процесĕсен пахалăхĕ

## Тавра çулăн йывăр тиевлĕ транспорт хатĕрĕсемшĕн тӳсĕмлĕ пулмалла

**Виçĕ муниципалитет – Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисем тата Шупашкар районĕ – валли тăвакан йăлари хытă каяшсен полигонĕ патне Çĕнĕ Шупашкар хули тавран выртакан çула сарас тата реконструкцилес ыйтусемпе Чăваш Ен Транспортпа çул-йĕр хуçалăхĕн министерствинче иртнĕ ĕçлĕ канашлура ведомство ертӳçи Михаил Янковский тĕп тĕллевсене уçăмлăн палăртнăранпа вăхăт нумаях та иртмерĕ – вĕсем мĕнле шайра пурнăçланнине вырăна тухса тĕрĕслерĕ.**

Тĕрĕслемелли, виçсе хак памалли вара, экспертсен шучĕпе сахал мар. Чи малтанах объект строительствипе реконструкцийĕн тĕрлĕ тапхăрĕнче çул-йĕр ĕçĕсен калăпăшĕ ӳснине кура смета документацийĕсенчи тăксене тепĕр хут шутламалла. Министр ЧР строительствинчи экспертизăпа хак пулăмĕсен центрĕн сĕнĕвĕсемпе асăрхаттарăвĕсене шута илсе çак ĕçе пурнăçлассине хăвăртлатма ыйтнăччĕ – ку пĕрремĕшĕ. Иккĕмĕшĕнчен, «Чувашавтодор» ОАО подряд организацийĕн автоçулăн пĕрремĕш участокĕнче çĕр анине хăпартса çулăн конструктивлă сийĕсене сарас тĕлĕшĕпе васкамалла. «Технологи процесĕсен пахалăх тĕрĕслевне уйрăм тимлĕх уйăрмалла», – сĕтел хушшинчи канашлура асăрхаттарнăччĕ Михаил Вячеславович.

Объектри тĕл пулу вара шанăça тӳрре кăларассине виçме май пачĕ. Çула çулталăк вĕçленнĕ тĕле хута яма планланă-çке-ха. Вăл тӳрре тухасси çул строительствинче вăй хуракан кашни ĕçчен тăрăшулăхĕнчен килет.

Хальхи вăхăтра тĕп участок çинче çĕр анине хăпартас, унăн çӳлти сийне хура щебень сарас, хăйăр никĕсĕ хатĕрлес, тимĕрбетон кĕпере юсас тĕлĕшĕпе хĕрӳ ĕçсем пыраççĕ. Производство графикĕпе килĕшӳллĕн объекта 20 единица çул-йĕр техники ĕçлет. Чăваш Ен Трансминĕн пресс-службин иккĕмĕш участокра пĕтĕм ĕçе вĕçленине пĕлтерет. Подрядчик çул-йĕр паллисене çырма, вырнаçтарма хатĕрленет. Виççĕмĕш участокра çул айккине, тротуар йĕркелес, çĕр ани хысакĕн планировкине хатĕрлес тата «Кӳкеç – Тутаркасси – Çĕнĕ Шупашкар» автоçулпа пĕрлештерес ĕçсене пурнăçлаççĕ. Çулăн çак юппинче çĕре сарлакалатас, хатĕр сие çирĕплетес тĕлĕшпе тăрăшаççĕ.

Тавра çул строительствин ыйтăвне полигон çӳп-çап йышăнма пуçличчен, кăçалах, татса пама май килесси куçкĕретех. Экспертсен шухăшĕпе, полигона туса пĕтерсе хута ярас ĕçре вăл çукки те ура хунă. Вĕсен хаклавĕпех толик-хураксисен – автоçул шăпах çак ял урамĕн 200 метр тăршшĕпе иртет – йывăр тиевлĕ транспорт сассинчен тата вăл сывлăша вараласа çӳренинчен шар курма тивмессе ĕнентереççĕ. Çӳп-çапа суйласа пресласан çак çулпа талăкра 20 автомашинăран ытла иртсе çӳремĕ – ку вара питĕ пĕчĕк виçе-мĕн.

ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ

ЯЛ ТĂРĂХĔСЕНЧЕ

## Йывăç татах лартасшăн

Кăçал **Шăмăшри** пултарулăх çурчĕ тавра карта тытса çаврăннă. Çуркунне хурăн, палан, пилеш, сирень лартса хăварнă. Унта ачасем те тăрăшса ĕçленĕ. Акă сентябрĕн 12-мĕшĕнче вĕсем чăрăшсем лартнă. Йывăççене Хусантан илсе килнĕ. Чăрăшсене лартса пĕтерсен ачасем Ваттисен кунне халлланă концерта хатĕрленме пуçланă: юрăсем вĕреннĕ, халăх инструменчĕсемпе кĕвĕ калана. Çамрăк ăру çак кĕркунне пултарулăх çурчĕ тавра тата ытларах йывăç лартса хăварасшăн.

## Шӳтлесе те, чăнласа та

Нумаях пулмасть **Илпеш** ял библиотекинче Б. Заходер пултарулăхне халлланă «Моя Воображилия» мероприяти иртнĕ. Ачасем çыравçă биографийĕпе паллашнă, унăн пултарулăхне пĕлекенсен турнирне хутшăннă. 1-мĕш турта вĕсем Б. Заходерăн савăнăçлă сăввисене аса илнĕ. 2-мĕш тур «Найди рифму» ятлă пулнă. Вĕренекенсем писатель сăввинче рифма тупнă. 3-мĕш турта авторăн тупмалли юмахĕсен тупсăмне пĕлнĕ. И. Сорокина сăмахĕнчен Б. Заходер пулăшнипе Винни Пух тата Мэри Поппинс, Питер Пэн тата Алиса ятлă хĕр ача «Англи çыннисем» вырăсла «каласа» пуçланине пĕлнĕ.

## Правасене пĕлетĕр-и?

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче Тутаркасси ял библиотекинче «Законпа тата совеçпе» темăпа курав йĕркеленĕ. Унта вулакансем хăйсен прависемпе паллашнă. Куравра уголовнăй, граждан, çемье прависем çинчен каласа панă. Сăмахран, «Килти право энциклопедийĕ» кĕнекепе паллашнă хыççăн транспорт хатĕрĕпе, упăшкипе арăмĕн пурлăхĕпе, пĕтĕмĕшле вĕрентӳпе, медицина пулăшăвĕпе çыхăннă ыйтусем çине хурав тупма май пур.

АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ




# Интернет портал çăмăллăх кӳрет

Паспорт хатĕрлеме, мăшăрланма заявлени çырма, ачана ят хума, ĕç тупма... эсир унччен хи пекех вăрăм черетре тăрса хăшкăлатăр-и?

**2010 çулта информацине тивĕçтерекен интернет сайчĕ евĕр ĕçлесе кайнăскер, паян вăл республика çыннисен вăхăтне перекетлесе хальхи пурнăç ыйтнă пек пурăнма, патшалăх пулăшăвĕсемпе чăрмавсăр усă курма май паракан пĕрлехи хăватлă портал пулса тăчĕ. Чăваш Енре унпа усă куракансен йышĕ 25 пинрен те иртрĕ.**

31-ри Людмила Завьялова хăйĕн кун тăршшине кашни минута виçсе йĕркеleме тăрăшать – виçĕ ача амăшĕн пушă вăхăт пачах та çук.

– Патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсемпе пĕрлехи портал урлă усă курма май пуррине пĕлсен питĕ хĕпĕртерĕм, – тет çавăнпа та. – Пĕчĕк ачапа – чи кĕçĕнни вара пĕрре те тултарман-ха – тĕрлĕ учреждение тухса çӳреме йывăр. Черет тăма тивсен тата!

Вăл сайтра чи малтан регистрациленекенсенчен пĕри пулнă. Компьютерпа пĕр чĕлхе тупнăскершĕн çак процедура йывăрлăх кăларса тăратман. Республикăри влаç органĕсен сар.ru порталĕнче «патшалăх пулăшăвĕсем» баннер пур – унта кĕмелле те. Регистрациленме паспорт тата СНИЛС – РФ Пенси фондĕнче паракан пластик удостоверени – кирлĕ. Документсенчи информацие çырнă хыççăн сервис харпăр кабинетăн активаци кодне илмелли меслете суйлама хушать: Раççей почтин е «Ростелеком» ОАО çыхăну уйрăмĕсенче. Йăнăшма май çук – вăл хăех тӳрлетет е тĕрĕслеме, информацие çĕнĕрен кĕртме электрон почта адресĕпе каялла «тавăрса парать». Почта урлă çыру вăтамран эрне çитет, çыхăну операторĕ патĕнче вăл регистрациленнĕ хыççăн 15 минутранах хатĕр. Людмила çак «асамлă» кода почта урлă тăватă кунранах кĕтсе илнĕ. Пĕр хут кăна регистрациленме тивнине шута илсен çыхăну уйрăмне çитсе килесси, ун шухăшĕпе, пысăк чăрмав тееймĕн. Çырăва извещени панă хыççăн паспорт тăрăх кăна пани те сыхăлăх тĕллевĕпе çыхăннине лайăх ăнланать.

– Унсăрăн сирĕн документсемпе усă курса ют çын пĕтĕмпех – çав шутра Раççей Пенси фондĕнче пенси валли мĕн чухлĕ укçа пухăннине те – пĕлсе тăрĕччĕ, – тет кăмăллăн йăл кулса. Кода активацилесе хăйĕн кабинетне ăнăçлă кĕнĕ хыççăн оператор чăрмавсем пирки кăсăкланма шăнкăравласа ыйтни вара Людмила палăртнă тăрăх – «пулăшу порталĕн ĕçне ансат, кашни çын уйрăмлăхне тĕплĕ шута илсе йĕркеленине» кăтартать. Пирĕн хушăмăрта компьютерпа лайăх усă курма пĕлмен çынсем те пур.

– Онлайн-пулăшăвăн хăш тĕсĕпе ытларах усă куратăр? – кăсăклантăмăр эпир.

– Ача çуралнине ĕнентерекен хута илнĕччĕ, ун урлах ача садне черете тăтăмăр. Çур çулта пĕрре çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тӳлевĕшĕн субсиди илме заявлени çыратпăр, налог тӳлетпĕр. Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн штрафне те куçарнăччĕ... Халĕ патшалăх пулăшăвĕпе çурт-йĕрлĕ пулмашкăн черете тăрасшăн.

Чăваш Ен Информаци политикин министерстви уйăхсерен ирттерекен мониторинг тăрăх республика çыннисем Интернет урлă ытларах чухне мăшăрланма тата ĕç тупма заявлени çырни паллă. Кунсăр пуçне пĕрлехи портал урлă патшалăх хысни тӳлеме, паспорт, çав шутра чикĕ леш енне каймалли те, водитель удостоверенийĕ илмешкĕн заявлени çырма тата пулушăвăн ытти вунвун тĕсĕпе усă курма май пур.

**ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ**

ЦИФРАСЕН ЧĔЛХИПЕ

**Патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕ урлă паян Чăваш Ен çыннисен регион тата муниципалитет шайĕнчи**

**69 тĕрлĕ ыйтăва тивĕçтерме май пур.**

САМАХ МАЙ

**Учет çыравĕпе усă курса патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕ урлă «УЭК-Онлайн» ятарлă сервис валли те авторизациленме май пур. «УЭК-Онлайн» – патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсемпе тивĕçтерекен органсемпе çыхăннă информацие уçса памалли, налогсем, штрафсем, патшалăх пошлинисем тӳлемелли электрон площадка. Универсаллă электрон карта хуçисем компьютерпа усă курса пĕрремĕш квитанцисене пичетлеме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Çывăх вăхăтрах вĕсен вăйлатса квалификациленĕ электронла алă пусни тăрăх «УЭК-онлайнра» электрон килĕшӳсемпе договорсене çирĕплетме май пулĕ. Çĕнĕ ресурс Раççей субъекчĕсенчи, çав шутра Чăваш Енри те, патшалăх тата муниципалитет учрежденийĕсен пулăшăвĕсемпе çыхăннă тӳлев реквизичĕсен тулли тата актуаллă справочникĕ пулса тăчĕ.**

ХЫПАР-ХĂНАР

## Автомобиль «кăвак çулăмсăр» хăварнă

Пĕрлехи диспетчер службине Чĕркашра çĕр чавакан машина вăтам пусăмлă газ пăрăхне перĕнни пирки пĕлтерсе шăнкăравланă. Шалти ĕçсен Шупашкар районĕнчи пайĕнчен килсе çитнĕ оперативлă ушкăн Çĕнĕ Лапсартан «Шупашкар чăх-чĕп фабрики» предприяти еннелле каякан çул юппинчен 50 метр аяккарах – поселокран Чĕркеше кайнă çĕрте – автоçултан 4 метрта 2 метр диаметрлă котлована асăрханă. Тарăнăшĕ те çавăн чухлех. Çĕр çийĕнчен 1,9 метрта газ пăрăхĕ курăннă. Ун çинчи касăк, шăйрăк йĕрсем нумай пулмасть çеç «тупăннă».

Шăтăкран икĕ метр айккинче выртакан тăватă тимĕр-бетон юпа та полици сводкине лекнĕ, анчах ĕçĕ кунта мар-ха... Телее, çак тăрăхра пурăнакансен «кăвак çулăма» вăрах кĕтме тивмен. Пăрăха кĕске хушăрах юсанă, газ панă. Сăтăрçă-транспорт хуçине вара халĕ те тупса палăртман-ха.

УЯВ

## Ваттисене халлланă концерт

**Сентябрĕн 14-мĕшĕнче çывхарса килекен ваттисен кунĕ ячĕпе «Шурăмпуç» фольклор ушкăнĕ Лапсар тăрăхĕнчи Мăн Карачура ялĕнче концерт лартса пачĕ. Уява кафере ирттерчĕç. Кунта «Шурăмпуça» ертсе пыракан Вăрман Çĕктер ял тăрăхĕнчи Шупашкаркассин ИКЦ директорĕ Любовь Ивановăпа Леонид Захаров музыкант та пулчĕç.**

Кафери тĕл пулу залне илемлетсе хатĕрлени нумайăшне килĕшрĕ. Ăна пурнăçлаканĕ Лапсар ял тăрăхĕн депутачĕ, Григорий Попов пулчĕ. Тĕл пулăва район пуçлăхĕ Алевтина Исаева, Лапсар ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн председателĕ Татьяна Максимова тата Лапсар ял тăрăхĕн депутачĕ Иван Филиппов хутшăнчĕç.

Малтанах Алевтина Исаева пухăннисен умĕнче Шупашкар районĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тата Пенси фончĕн çĕнĕлĕхĕсем çинчен каласа кăтартрĕ. Каярах ыйту-хурав ирттерчĕ.

Уява Лапсар ял тăрăхĕнчи Вăрманкассин ИКЦ директорĕ, Ирина Афанасьева ертсе пыни нумайăшĕн асĕнче юлчĕ. «Шурăмпуç» фольклор ушкăнăн уяв концерчĕ ваттисен кăмăлне тивĕçтерчĕ», – тесе пĕлтерчĕ Любовь Иванова.

САМАХ МАЙ

**Шупашкар районĕнче пĕтĕмпе 14 пин ытла пенсионер пурăнать, вĕсене пенсие вăхăтра валеçес тесе ырми-канми тăрăшаççĕ.**

**НИКОЛАЙ СМИРНОВ,** АТĂЛЪЯЛ

## Пурнăç таппи

ИРТНĔ ВĂХĂТ

# Çилпе çăка авăнать...

... пире пуç тайнăн туйăнать... Чăваш мĕн ĕлĕкрен çут çанталăка юратнă, хисепленĕ, ăна пуянлатас тесе сахал мар тăрăшнă. Паян эпир пурăнакан вырăна çитсе вырнаçсан вăл тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ: йĕри-тавра вăрман, мĕнле кăна йывăç çук-ши унта!

Вăхăт иртнĕçемĕн хырпа чăрăшран пура хăпартнă, аялти ретсене юманран ăсталанă. Пӳрт тăррине типнĕ курăкпа витнĕ, ун çине ватă çăка хуппине тирпейлесе вырнаçтарнă. Савăт-сапине те çăкаран касса хатĕрленĕ.

Ватă йывăç хуппине нумай вăхăт шывра тытсан мунчала тухать, хуçалăхра усă курма вĕрен явма та пулать. Чечек çурнă вăхăтра ун йĕри-тавра пыл хурчĕсем сĕрлесе явăнаççĕ. Çак чечеке вĕрекен шыва ярса чир-чĕртен сипленмелли эмел хатĕрлеме пулать. Каярах пулса çитнĕ мăйăра апат пĕçернĕ чухне усă курма юрать. Малтанхи сивĕсем пуçланиччен çулçипе тураттинчен путек валли паха апат тухать.

XIX ĕмĕр вĕçнелле халăх йышĕ хăвăрт ӳсет, çавна пула вăрмансен лаптăкĕ чаксах пырать. Граждан вăрçи пуçланнă вăхăталла пирĕн ял çывăхĕнчи вăрман çухалать. 1921-1922, 1932-1933 çулсенчи выçлăх вăхăтĕнче халăхăн тĕрлĕ йывăрлăх, асап курма тивет. Çăка та терт-нушаран «çăлма тăрăшать». Йывăça пăчкăпа татнă чух кĕрпе тухать. Ăна вĕтетнĕ çĕр улмипе хутăштарса пĕçерсен çăкăр пулать.

Çав вăхăталла пирĕн ялта 10-12 семьере кăна урана атă-пушмак тăхăнса çӳренĕ. Ыттисем вара чăваш юрринче каланă пек: «Ах, турă тупата, ман урара çăпата». Совет влаçĕ тăрăшнипе ялсенче тĕрлĕ ĕç эртелĕсем йĕркеленеççĕ. Çак ĕç валли хамăр ялти Василий Лаврентьев ял пуçĕнче ятарласа пысăк çурт лартать. Кунĕн-çĕрĕн вăтăра яхăн çын çакăнта чăпта çапать. Хĕл ларсан вуншар лав Йĕпреçе кайса мунчала тиесе килет, ăна халăха салатса парать. Вăрçă çулĕсенче çак эртеле Николай Яковлев йĕркелесе тăрать. Аксиния Тарасова халăхран чăпта пухса Шупашкара, Канаша, Сĕнтĕрвăррине ăсатать. Уйăхра ĕçшĕн пĕр хут укçалла тӳлеççĕ. Чăптан калăпăшĕ тĕрлĕрен пулнă. Ăна тумалли ĕç хатĕрне манăн атте Павел Краснов ăсталанă. Пирĕн урамри çĕ çул аслăрах Гена чăпта çапма пулăшнă.

Çак ĕçе тума çăмăл пулман. Аслисем ирхине 3 сехетрен пуçласа каçхи 30 яхăн килтен çиччĕшĕнче чăпта çапнă. Ку ĕçе тума 3-4 çын кирлĕ пулнă. Чăптана хĕл ларсан çапма пуçланă та юр ирĕлсен вĕçленĕ. Мана, шкул ачине, ирхине 5 сехетре тăратса 7 сехетчен хĕçне тиртернĕ, чăпта миххи çĕлеттернĕ. Манран вине 9 сехетчен ĕçленĕ. Пӳртре яланах нӳрĕк сывлăш, мунчала шăрши тăнă, пӳлĕме кантăксăр краççын лампăпа çунтарнă. Апат-çимĕç пуриншĕн те çителĕксĕр пулнă.

**Хушу кăларнă: «Çамрăк çăкана касса çут çанталăка сиен кӳнĕшĕн тĕрмене хупмалла тăвас».**

Урана тăхăнма чăваш çăпата ăсталанă. Ăна 8-10 çулти яштака çăкаран хатĕрленĕ. Çуркунне хуппине сӳнĕ те сулхăнра типĕтнĕ. Кайран çивĕч çĕçĕпе 2-3 сантиметр сарлакăш виçсе каснă. Çăпата тума пур арçын та пĕлнĕ. Ку енĕпе Федор Абрамова çитекенни пулман. Илемлетсе ăсталанă хĕрарăм çăпатине юнашар ялсенчен те илме çӳренĕ. Архиври хутсем тăрăх çакă паллă: Граждан вăрçи вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар валли чăваш ăстисем 3 млн яхăн çăпата туса панă. Манăн атте Павел Краснов тутар çĕрĕ çинче салтакра пулнă. Ун патне манăн анне икĕ хут çуран кайса килнĕ. Çул çинче пурĕ 10 кун иртнĕ. Çурăм хыçĕнчи кутамккара 5-6 мăшăр çăпата, сухари, килте çитĕнтернĕ табак пулнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче Совет влаçĕ ятарлă хушу кăларнă: «Çамрăк çăкана касса çут çанталăка сиен кӳнĕшĕн тĕрмене хупмалла тăвас».

Чăпти те, ăна çапмалли хатĕрсем те, урари çăпата та – халĕ куç умĕнчех. Мĕн чухлĕ нуша кăтартнă-ши вĕсем пире! Кӳкеçри вăтам шкулти 8-мĕш класа çӳрекен ачасенчен чылайăшĕ вĕренме çăпата сырса пынă, хăшĕ-пĕри – çара уран. Эпĕ салтака кайнă çул кăна пирĕн килте чăпта çапма пăрахрĕç.

Совет влаçĕ арканиччен чăвашра кашни лесничество çумĕнчех ятарласа уçнă цехсем ĕçленĕ. Иккасси ялĕ çывăхĕнче ку енĕпе 30 яхăн çын çăкаран тĕрлĕ савăт-сапа, сувенир туса çывăхри хуласене ăсатнă. Паянхи кун вĕсен алăкĕсем хупă.

Çăка пахалăхĕ, пĕлтерĕшĕ, усăлăхĕ пирки паян нумайăшĕ нимĕн те пĕлмест. Çăка турă йывăççи тесен те юрать. Пире вăл тăхăнмалли те, таса сывлăш та панă.

**ЛЕОНИД ПАВЛОВ,**
ЧĂРĂШКАССИ

САНСЕМ

## Чăрăшкасси шкулĕ

Çакăнта савăнса-кулса пуçтарăннă ачасем 1955-1958-мĕш çулсенче çуралнă. Аслă класра вĕреннĕ хĕрачасем паянхи куна пенсие те тухма ĕлкĕрнĕ. Шыраса тупăр-ха хăвăра.

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

## Пĕчĕк ялăн пысăк савăнăçĕ

**Ял пурнăçĕ лайăхланса пырать. Акă Шĕнерпуç ял тăрăхĕнчи Çырмапуçнех илер. Ял пуçĕнче пысăк тимĕр хапха пур. Çулсерен ялта хăтлă çуртсен шучĕ ӳсет, пĕри тепринчен чаплăрах, илемлĕрех. Чылайăшĕ тимĕр урхамахне «кӳлсе çӳрет». Ялта ача нумайланни те савăнтарать. Эппин, ял малашлăхĕ пирки кулянма сăлтав çук.**

Çумăр вăйлă çусан, çуркунне е кĕркунне пĕр-икĕ çул каялла яла машинăпа кĕрсе тухма май çукчĕ. Васкавлă пулăшу машини, лавккана е киле мĕн те пулин илсе килекен машинăсен шоферĕсем çак урамри çула (çул тесе калама чĕлхе те çаврăнмасть) мĕнле сăмах кăна каласа вăрçман пуль! Чылай чухне машинăна ял пуçĕнче лартса хăваратчĕç. Çурт хăпартмалли стройматериал тиесе килнĕ машинăна ял халăхĕн вăйĕпе тĕксе кăларма тиветчĕ.

Халĕ вара çавнашкал «мыскарасем» манăçа тухма пуçларĕç. Кăçал Çырмапуç урамĕ варрипе вĕтĕ чул сарчĕç, ял халăхĕ те çак ĕçе хутшăнчĕ. Халĕ вара кирек епле çанталăкра та яла машинăпа кĕрсе тухма пулать. Иртнĕ çул вара çунса кайнă шыв уçламалли мотора çĕнĕ насоспа улăштарчĕç. Кун пек чух ял уявне хăнасене те чĕнме кăмăллă. Малалла та çапла ăнăçлă ĕçлесе пырасчĕ.

**ГЕРМАН СЕМЕНОВ,** ÇЫРМАПУÇ

# ТВ Эрне

Тс ТЕЛЕСЕРИАЛ
Х ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ
Д ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ
М Мультфильм

## сент 23 понедельник — тунти кун

### ПЕРВЫЙ
**5.00,** 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
**5.05** Доброе утро
**9.15,** 4.30 Контрольная закупка
**9.45** Жить здорово! 12+
**10.55** Модный приговор
**12.15** Время обедать!
**13.00** Доброго здоровьица! 12+
**13.45** Истина где-то рядом 16+
**14.00** Другие новости
**14.25** Тс ДОМРАБОТНИЦА 16+
**15.15** Самый лучший муж 16+
**16.10** Тс ЯСМИН 16+
**17.00** В наше время 12+
**18.50** Давай поженимся! 16+
**19.50** Пусть говорят 16+
**21.00** Время
**21.30** Тс ВАНГЕЛИЯ 12+
**23.30** Вечерний Ургант 16+
**0.10** Х **ПЕРЕВОЗЧИК 16+**
**1.05, 3.05** Х **КОНАН-ВАРВАР 16+**
**3.40** Тс ФОРС-МАЖОРЫ 16+

### РОССИЯ 1
**5.00** Утро России
**9.00** 1000 мелочей
**9.45** О самом главном
**10.30** Кулагин и партнеры 12+
**11.00,** 14.00, 17.00, 20.00 Вести
**11.50,** 14.50 Вести. Дежурная часть
**12.00** Тс ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ 12+
**13.00** Особый случай 12+
**15.00** Тс ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ
**16.00,** 17.30 Тс СКЛИФОСОВСКИЙ 12+
**18.30** Прямой эфир 12+
**20.50** Спокойной ночи, малыши!
**21.00** Тс СВАТЫ-5 12+
**1.20** Девчата 16+
**2.00** Х **НЕПРОЩЕННЫЙ 16+**

### ЧУВАШИЯ
**6.07,** 6.35 Вести-Чăваш ен
**7.07,** 7.35 Утро Чувашии
**8.07,** 8.35 Утро Чувашии
**11.30** Вести-Чăваш ен
**14.30** Вести-Чувашия
**17.10**-17.30 Вести-Чăваш ен
**19.40**-20.00 Вести-Чувашия
**На канале** Россия 2
**7.20**-7.50 Страна спортивная. Чувашия

### РОССИЯ К
**7.00** Евроньюс
**10.00,** 15.40, 19.30, 23.40 Новости культуры
**10.15** Наблюдатель
**11.15,** 1.40 Тс ПЕРРИ МЭЙСОН
**12.10** Д Свой голос. Клавдия Еланская
**12.50** Д Жители долины Ваги
**13.45** Тс ДОСТОЕВСКИЙ
**14.40** Мировые сокровища культуры
**15.00** Д Теория относительности счастья. По Андрею Будкеру
**15.50** Д Чрезвычайное путешествие
**16.55** Х **ПУТЕШЕСТВИЕ НА ЛУНУ**
**17.15** Выдающиеся сочинения XX века. Д. Шостакович Симфония №6
**18.00** Д К. Р.
**18.40** Academia
**19.45** Главная роль
**20.00** Сати. Нескучная классика...
**20.40** Д Одни ли мы во Вселенной?
**21.25** Острова
**22.10** Хлеб и Голод
**22.50** Тем временем
**0.00** Х **ВОЙНА И МИР**
**1.35** Д Христиан Гюйгенс
**2.30** Н. Метнер. Романтическая соната

### НТВ
**6.00** НТВ утром
**8.35,** 10.20 Тс ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
**10.00,** 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
**10.55** До суда 16+
**11.55** Суд присяжных 16+
**13.25** Суд присяжных. Окончательный вердикт 16+
**14.35** ДЕЛО ВРАЧЕЙ 16+
**15.30,** 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
**16.25** Прокурорская проверка 16+
**17.40** Говорим и показываем 16+
**19.30** Тс ДЕЛЬТА 16+
**21.25** Х **МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ 16+**
**23.15** Сегодня. Итоги
**23.35** Тс КАРПОВ 16+
**0.35** Тс ПРЕДАТЕЛЬ 16+
**2.35** Дикий мир 0+
**3.05** Тс ВЕРНУТЬ НА ДОСЛЕДОВАНИЕ 16+
**5.00** Тс ЧАС ВОЛКОВА 16+

### ТНТ
**7.00** М Планета Шина 12+
**7.30** М Черепашки-ниндзя 12+
**7.55,** 8.25 Тс СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ 16+
**9.00** Дом-2. Lite 16+
**10.30** Х **ТРОЯ 16+**
**14.00** Тс УНИВЕР 16+
**14.30,** 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 19.00, 19.30, 20.00, 20.30 Тс ИНТЕРНЫ 16+
**18.00,** 18.30 Тс РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ 16+
**21.00** Х **МАЛЬЧИШНИК В ВЕГАСЕ 16+**
**23.00** Дом-2. Город любви 16+
**0.00** Дом-2. После заката 16+
**0.30** Тс МОИМИ ГЛАЗАМИ 16+
**0.55** Х **АППАЛУЗА 16+**
**3.10** Тс ПРИГОРОД 16+
**3.35** Х **ПРЕСЛЕДОВАНИЕ 16+**
**4.30** Школа ремонта 12+
**5.30** Тс САША + МАША 16+
**6.05** М Озорные анимашки 12+
**6.30** Тс ЮНАЯ ЛИГА СПРАВЕДЛИВОСТИ 12+

### ТВЦ
**6.00** Настроение
**8.30** Х **У ОПАСНОЙ ЧЕРТЫ 12+**
**10.20** Д Николай Олялин. Раненое сердце 12+
**11.10,** 19.50 Петровка, 38 16+
**11.30,** 14.30, 17.30, 22.00 События
**11.50** Постскриптум 16+
**12.55** В центре событий 16+
**13.55** Понять. Простить 16+
**14.50,** 19.30 Город новостей
**15.10** Городское собрание 12+
**15.55** Х **БАРМЕН ИЗ ЗОЛОТОГО ЯКОРЯ 12+**
**17.50** Чужая воля 16+
**18.25** Право голоса 16+
**20.05** Тс ЗОЛОТО СКИФОВ 16+
**22.20** Без обмана. В винном угаре 16+
**23.10** Х **МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ 12+**
**0.00** События. 25-й час
**0.35** Футбольный центр
**1.00** Мозговой штурм. Запчасти для человека 12+
**1.35** Х **ПУАРО АГАТЫ КРИСТИ 12+**
**3.35** Х **ИНСПЕКТОР ЛЬЮИС 12+**
**5.30** Х Все о крокодилах 12+

### СТС
**6.00** М Приключения Джеки Чана 6+
**7.00** М Парящая команда 6+
**7.30** М Клуб Винкс - школа волшебниц 12+
**8.00,** 9.00, 9.30, 14.30, 1.30 Тс 6 КАДРОВ 16+
**9.35** Х **ЖЕЛЕЗНЫЙ ЧЕЛОВЕК-2 16+**
**12.00,** 17.00 Тс КУХНЯ 16+
**12.30, 17.30** Х **ВОСЬМИДЕСЯТЫЕ 16+**
**13.00,** 23.30, 0.00 Тс ДАЕШЬ МОЛОДЕЖЬ! 16+
**13.30,** 14.00, 18.00, 18.30, 19.30 Тс ВОРОНИНЫ 16+
**14.45** Шоу Уральских пельменей. Не вешать хвост, ветеринары! 16+
**16.00** Шоу Уральских пельменей. Женское: - Щас я! 16+
**19.00,** 21.00 Тс ПОСЛЕДНИЙ ИЗ МАГИКЯН 16+
**21.30** Х **ФОРСАЖ 16+**
**0.30** Кино в деталях 16+
**1.45** Х **КРОВАВЫЙ ОКРУГ. 1974 18+**
**3.45** Х **ЛОХМАТЫЙ ПАПА 6+**
**5.35** Музыка на СТС 16+

## сент 24 вторник — ытлари кун

### ПЕРВЫЙ
**5.00,** 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
**5.05** Доброе утро
**9.15** Контрольная закупка
**9.45** Жить здорово! 12+
**10.55** Модный приговор
**12.15** Время обедать!
**13.00** Доброго здоровьица! 12+
**13.45** Истина где-то рядом 16+
**14.00** Другие новости
**14.25** Тс ДОМРАБОТНИЦА 16+
**15.15** Самый лучший муж 16+
**16.10** Тс ЯСМИН 16+
**17.00** В наше время 12+
**18.50** Давай поженимся! 16+
**19.50** Пусть говорят 16+
**21.00** Время
**21.30** Тс ВАНГЕЛИЯ 12+
**23.30** Вечерний Ургант 16+
**0.10** Х **ПЕРЕВОЗЧИК 16+**
**1.05, 3.05** Х **НА ГРАНИ 16+**
**3.20** Тс ФОРС-МАЖОРЫ 16+
**4.10** Х **МОНСТРЫ ПРОТИВ ПРИШЕЛЬЦЕВ. ТЫКВЫ-МУТАНТЫ ИЗ ОТКРЫТОГО КОСМОСА 12+**

### РОССИЯ 1
**5.00** Утро России
**9.00** 1000 мелочей
**9.45** О самом главном
**10.30** Кулагин и партнеры 12+
**11.00,** 14.00, 17.00, 20.00 Вести
**11.50,** 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
**12.00** Тс ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ 12+
**13.00** Особый случай 12+
**15.00** Тс ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ
**16.00,** 17.30 Тс СКЛИФОСОВСКИЙ 12+
**18.30** Прямой эфир 12+
**20.50** Спокойной ночи, малыши!
**21.00** Тс СВАТЫ-5 12+
**0.15** Специальный корреспондент 16+
**1.20** Старатели морских глубин. Найти затонувшие миллиарды
**2.20** Х **ВЫЗЫВАЕМ ОГОНЬ НА СЕБЯ**
**4.20** Комната смеха

### ЧУВАШИЯ
**6.07,** 6.35 Вести-Чăваш ен
**7.07,** 7.35 Утро Чувашии
**8.07,** 8.35 Утро Чувашии
**9.00** Утренний гость (на чувашском языке)
**9.30**-9.45 Родительский день
**11.30** Вести-Чăваш ен
**14.30** Вести-Чувашия
**17.10**-17.30 Вести-Чăваш ен
**19.40**-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К
**6.30** Евроньюс
**10.00,** 15.40, 19.30, 23.40 Новости культуры
**10.15** Наблюдатель
**11.15,** 1.55 Тс ПЕРРИ МЭЙСОН
**12.10** Слово Андроникова. Горло Шаляпина, Беседа генерала Чанчибадзе с бойцами пополнения
**13.10** Д Христиан Гюйгенс
**13.20** Пятое измерение
**13.45** Тс ДОСТОЕВСКИЙ
**14.40** Мировые сокровища культуры
**15.00** Сати. Нескучная классика...
**15.50,** 20.40 Д Одни ли мы во Вселенной?
**16.35** Д Я гений Николай Глазков...
**17.15** Выдающиеся сочинения XX века. С. Прокофьев Соната №8 для фортепиано
**18.15** Д 4001-й литерный. Поезд-призрак
**18.40** Academia
**19.45** Главная роль
**20.00** Власть факта. Когда умрут газеты?
**21.25** Д Муслим Магомаев. Незаданные вопросы
**22.10** Хлеб и Деньги
**22.55** Игра в бисер
**0.00** Х **ВОЙНА И МИР**
**1.20** Ф. Шопен. Концерт №2 для фортепиано с оркестром
**2.50** Д Джордано Бруно

### НТВ
**6.00** НТВ утром
**8.35,** 10.20 Тс ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
**10.00,** 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
**10.55** До суда 16+
**11.55** Суд присяжных 16+
**13.25** Суд присяжных. Окончательный вердикт 16+
**14.35** ДЕЛО ВРАЧЕЙ 16+
**15.30,** 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
**16.25** Прокурорская проверка 16+
**17.40** Говорим и показываем 16+
**19.30** Тс ДЕЛЬТА 16+
**21.25** Х **МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ 16+**
**23.15** Сегодня. Итоги
**23.35** Тс КАРПОВ 16+
**0.35** Тс ПРЕДАТЕЛЬ 16+
**1.35** Главная дорога 16+
**2.05** Чудо техники 12+
**2.40** Дикий мир 0+
**3.05** Тс ВЕРНУТЬ НА ДОСЛЕДОВАНИЕ 16+
**5.00** Тс ЧАС ВОЛКОВА 16+

### ТНТ
**7.00** М Планета Шина 12+
**7.30** М Черепашки-ниндзя 12+
**7.55,** 8.25 Тс СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ 16+
**9.00** Дом-2. Lite 16+
**10.30** Битва экстрасенсов 16+
**11.30** Тс МАЛЬЧИШНИК В ВЕГАСЕ 16+
**13.30,** 14.00 Тс УНИВЕР 16+
**14.30,** 15.00, 19.00, 19.30, 20.00, 20.30 Тс ИНТЕРНЫ 16+
**15.30,** 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30 Тс РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ 16+
**21.00** Х **МАЛЬЧИШНИК-2: ИЗ ВЕГАСА В БАНГКОК 16+**
**23.00** Дом-2. Город любви 16+
**0.00** Дом-2. После заката 16+
**0.30** Тс МОИМИ ГЛАЗАМИ 16+
**0.55** Х **ДВОЙНЫЕ НЕПРИЯТНОСТИ 12+**
**2.40** Тс ПРИГОРОД 16+
**3.05** Х **ПРЕСЛЕДОВАНИЕ 16+**
**3.55** Школа ремонта 12+
**4.55** Д Необъяснимо, но факт 16+
**5.50** САША + МАША 16+
**6.05** М Озорные анимашки 12+
**6.30** Тс ЮНАЯ ЛИГА СПРАВЕДЛИВОСТИ 12+

### ТВЦ
**6.00** Настроение
**8.30** Х **ОПАСНО ДЛЯ ЖИЗНИ! 12+**
**10.20** Д Леонид Гайдай. Необычный кросс 12+
**11.10,** 19.50 Петровка, 38 16+
**11.30,** 14.30, 17.30, 22.00 События
**11.50** Дом вверх дном 12+
**12.55** Тс МЕТОД ЛАВРОВОЙ 16+
**13.55** Понять. Простить 16+
**14.50,** 19.30 Город новостей
**15.10** Наша Москва 12+
**15.30** Х **ЧЕРНЫЙ ТРЕУГОЛЬНИК 12+**
**16.55** Доктор И... 16+
**17.50** Истории спасения 16+
**18.25** Право голоса 16+
**20.05** Тс ЗОЛОТО СКИФОВ 16+
**22.20** Д Олег Видов. Всадник с головой 12+
**23.10** Х **МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ 12+**
**0.05** События. 25-й час
**0.40** Х **ОПЕРАЦИЯ ТАЙФУН ЗАДАНИЯ ОСОБОЙ ВАЖНОСТИ 12+**
**4.15** Д Русское чтиво 12+
**5.25** Х Все о хищных птицах 12+

### СТС
**6.00** М Приключения Джеки Чана 6+
**7.00** М Парящая команда 6+
**7.30** М Клуб Винкс - школа волшебниц 12+
**8.00,** 23.25 Тс 6 КАДРОВ 16+
**9.00,** 11.30, 13.30, 14.00, 18.00, 18.30, 19.30 Тс ВОРОНИНЫ 16+
**9.30** Х **ФОРСАЖ 16+**
**12.00,** 17.00 Тс КУХНЯ 16+
**12.30, 17.30** Х **ВОСЬМИДЕСЯТЫЕ 16+**
**13.00,** 23.30, 0.00 Тс ДАЕШЬ МОЛОДЕЖЬ! 16+
**15.00,** 16.00 Шоу Уральских пельменей. Женское: - Щас я! 16+
**19.00,** 21.00 Тс ПОСЛЕДНИЙ ИЗ МАГИКЯН 16+
**21.30** Х **ТРОЙНОЙ ФОРСАЖ. ТОКИЙСКИЙ ДРИФТ 16+**
**0.30** Нереальная история 16+
**1.00** Х **ЧЕЛОВЕК С ДОЖДЕМ В БОТИНКАХ 16+**
**2.50** Х **БИЗНЕС РАДИ ЛЮБВИ 12+**
**4.35** Х **ЗАКОН И ПОРЯДОК. СПЕЦИАЛЬНЫЙ КОРПУС 16+**
**5.25** Тс ДИАГНОЗУ ВОПРЕКИ 16+

### НТВ
**6.00** НТВ утром
**8.35,** 10.20 Тс ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА 16+
**10.00,** 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
**10.55** До суда 16+
**11.55** Суд присяжных 16+

## сент 25 среда — юн кун

### ПЕРВЫЙ
**5.00,** 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
**5.05** Доброе утро
**9.15** Контрольная закупка
**9.45** Жить здорово! 12+
**10.55** Модный приговор
**12.15** Время обедать!
**13.00** Доброго здоровьица! 12+
**13.45** Истина где-то рядом 16+
**14.00** Другие новости
**14.25** Тс ДОМРАБОТНИЦА 16+
**15.15** Самый лучший муж 16+
**16.10** Тс ЯСМИН 16+
**17.00** В наше время 12+
**18.50** Давай поженимся! 16+
**19.50** Пусть говорят 16+
**21.00** Время
**21.30** Тс ВАНГЕЛИЯ 12+
**23.30** Вечерний Ургант 16+
**0.10** Х **ПЕРЕВОЗЧИК 16+**
**1.05, 3.05** Х **ОМЕН 18+**
**3.20** Тс ФОРС-МАЖОРЫ 16+

### РОССИЯ 1
**5.00** Утро России
**9.00** 1000 мелочей
**9.45** О самом главном
**10.30** Кулагин и партнеры 12+
**11.00,** 14.00, 17.00, 20.00 Вести
**11.50,** 14.50, 4.40 Вести. Дежурная часть
**12.00** Тс ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ 12+
**13.00** Особый случай 12+
**15.00** Тс ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ
**16.00,** 17.30 Тс СКЛИФОСОВСКИЙ 12+
**18.30** Прямой эфир 12+
**20.50** Спокойной ночи, малыши!
**21.00** Тс СВАТЫ-5 12+
**0.10** Вода
**2.00** Горячая десятка 12+
**3.05** Х **ВЫЗЫВАЕМ ОГОНЬ НА СЕБЯ**

### ЧУВАШИЯ
**6.07,** 6.35 Вести-Чăваш ен
**7.07,** 7.35 Утро Чувашии
**8.07,** 8.35 Утро Чувашии
**11.30** Вести-Чăваш ен
**14.30** Вести-Чувашия
**17.10**-17.30 Вести-Чăваш ен
**19.40**-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К
**6.30** Евроньюс
**10.00,** 15.40, 19.30, 23.40 Новости культуры
**10.15** Наблюдатель
**11.15,** 1.55 Тс ПЕРРИ МЭЙСОН
**12.10** Слово Андроникова. Земляк Лермонтова, Четыре часа из жизни Блока, Ошибка Сальвини
**13.20** Красуйся, град Петров!
**13.45** Тс ДОСТОЕВСКИЙ
**14.40** Мировые сокровища культуры
**15.00** Власть факта. Когда умрут газеты?
**15.50** Д Одни ли мы во Вселенной?
**16.35** Д Лицо дворянского происхождения. Алексей Ляпунов
**17.15** Б. Барток Концерт для оркестра
